# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ ИСТОРИЙĔНЧЕН

1956 çулхи май уйăхĕнче Чăвашсен чĕлхепе литературă, истори тата экономикă тĕпчев институчĕ чăваш халăхĕ епле чăмăртанса кайни çинчен ятарласа сесси ирттернĕччĕ. Каярахпа вара, 1957 çулта, çав сессире тунă докладсене, тухса калаçнă юлташсен сăмахĕсене пуçтарса, «О происхождении чувашского народа» ятлă кĕнеке тухнăччĕ.

Кунта хускатса ярас сăмах, шăп çак асăннă ыйту çинчен пымасть пулсан та, унпа тачă çыхăнса тăрать, мĕншĕн тесен чăваш халăхĕн авалхи кун-çулне тĕпчесе пĕлес ĕçре чĕлхе историйĕн йĕрĕ чи шанчăклă япаласенчен пĕри пулса тăрать.

Чăваш чĕлхи çинчен ăслăçсем çырма тытăнни хăй кăна историн пĕр тапхăрĕ пулса тăрать. Пур авторсен ĕçĕсем çинче чарăнса тăма кунта май та çук, çапах та чăваш чĕлхине тĕпчес ĕçре чи пысăк вăй хунă çынсен ячĕсене аса илни вырăнлă пек туйăнать.

«История Российская с самых древнейших времен» (1768, 317 страница) ятлă кĕнекере В. Н. Татищев çапла çырни пур: «Вниз по реке чуваши, древние булгары, наполняли весь уезд Казанской и Симбирской».

Çакăн хыççăн çĕр çул иртнĕ, анчах чăваш халăх историйĕпе чĕлхи çинчен тавлашу чарăнман. Пĕрисем чăвашсене фин-угор йăхĕнчен тухса тутарланнă халăхсем, теприсем—буртассем, хазарсем, аварсем, тенĕ.

Çак пăтрану Атăл çинчи авалхи пулхăрсен виçĕ чул палăкĕ çинчи сăмахсене Фейзханов вуласа тухиччен пынă. Фейзханов мулла хăй тĕпчесе пĕлни çинчен «Три надгробных булгарских надписи» (Известия Археологического общества, т. IV, 1863, стр. 395—404) ятлă статья пичетленĕ, палăк çине çырнă пулхăр сăмахĕсем чăвашла сăмахсем, тенĕ.

Н. И. Ильминский «О фонетических отношениях между чувашским и тюркскими языками» (Известия Арх. об-ва, т. I, 1865, стр. 80—84) статьяра чăваш тата пулхăр чĕлхинчи сасăсем ытти тюрк чĕлхисенчи хăшпĕр сасăсенчен уйрăлса тăнине кăтартнă.

Чăвашсемпе булгăрсем хушшинче чăнах та çыхăну пуррине чи малтан А. Куник академик ĕнентерÿллĕ кăтартса панă тесен те юрать. «О родстве Хагано-булгар по славяно-булгарскому Именику» ятлă тĕпчевре («Известия Ал-Бекри и других авторов о Руси и славянах, ч. I, приложение к 32 тому Записок И. Ак. Наук № 2, Санктпетербург, 1878) А. Куник академик çапла çырать: «Чем более я вдумывался в отношение чувашей к вымершим камским булгарам, тем более убеждался, что в чувашах мы встречаем, если не остатки так называемых белых или серебряных болгар (камских болгар), то все же одну из тюркских отраслей, к которой принадлежали и жители болгарского ханства в Среднем Поволжье...»

Дунай çинчи булгар хаганĕсем (кнеçĕсем) миçе çул пурăннипе миçе çул хаганра ларни çинчен А. Н. Попов профессор 1866 çулта пичетленĕ Хронографсемпе паллашнă хыççăн А. Куникăн малтанхи шухăшĕ тĕп шанăçа куçнă: «При первом же взгляде на этот Именик (булгăр хаганĕсен ячĕсем, М. Федотов) разобрал я при помощи давно уже мне известных числительных имен чувашского языка многие из этих последних загадочных числительных имен».

А. Н. Попов тĕпчесе тунă хронографсене вуласа тухсанах, А. Куник «Именик» çинчен хăй мĕнле шутланине Мускав, Хусан, Париж ученăйĕсене тата В. В. Радлов академике çав çулах çырса пĕлтерет. 1867 çулта вăл «Согласно желанию Вашему, пытаясь объяснить болгарские числа и сравнить их с числами известных мне тюркских наречий, я пришел к следующему выводу... Одно кажется мне безусловно верным,— а именно, что эти числа принадлежат народу, говорящему на тюркском наречии и что это наречие очень близко к чувашскому».

Чăвашсемпе пулхăрсем тĕлĕшпе пуринчен ытла Н. И. Ашмарин ĕçленĕ. XIX ĕмĕр вĕçĕнчи тата пирĕн вăхăтри историксем, чĕлхе тĕпчевçисем ытти тюрк халăхĕсемпе чăвашсем çинчен çырнă чухне тÿрех Н. И. Ашмарин ĕçĕ çине таяннă, таянаççĕ те. 1912 çулта Хусанта пичетленнĕ «Булгары и чуваши» кĕнекинче вăл В. Куник, Бернгард Мункачи, Фейзханов тата ытти ученăйсен ĕçĕсене тишкĕрсе тухать те хăйĕн татăклă сăмахне калать. Çакна ăслăçсем «Теория булгарского происхождения чуваш Н. И. Ашмарина», теççĕ.

1912 çулта Хельсинкинче Золтан Гомбоц Н. И. Ашмарин, Б. Мункачи тата ытти ăслăçсем вĕрентнипе усă курса, «Die bulgarisch-türkischen Lehnwörter in der ungarischen Sprache» уникаллă кĕнеке пичетлет. Кунта вăл мадяр чĕлхине кĕнĕ 250 яхăн пулхăр-чăваш сăмахĕсене ытти тюрк чĕлхисенчи сăмахсемпе танлаштарать, вĕсен хушшинчи çыхăнупа тытăнăва ĕненмелле кăтартать.

Чăваш чĕлхин историне тĕпчекен паянхи ăслăçсем нумай мар пулсан та вĕсем юлашки вăхăтра питĕ хаклă ĕç турĕç. Чăн малтан кунта В. Г. Егоров профессор тата Аслăлăх Академин член-корреспонденчĕ Б. А. Серебренников ячĕсене аса илмелле. Чăваш чĕлхипе историйĕ çинчен пĕлес тесен, малта асăннă «О происхождении чувашского народа» кĕнекере паха ĕçсем пур. И. Д Кузнецов, В. Д. Димитриев, Н. А. Андреев çырнисем хамăр чĕлхен историйĕпе паллаштараççĕ.

Халь эпир мадяр чĕлхине кĕнĕ пулхăрла-чăвашла сăмахсене пăхса тухăпăр, вĕсене чăн малтан, май килнĕ çĕрте, тутар, монгол чĕлхисемпе танлаштарăпăр.

Пирĕн статьяра малалла мадярла сăмахсем тĕл пулĕç*. Çавăн пирки çеç эпир кунта вулакансене мадяр чĕлхи тата ун орфографийĕ çинчен пĕр-ик сăмах каласшăн.

Финн-угор йышне кĕрекен чĕлхесенчен мадяр чĕлхи чи пысăккараххи. Фонетика енчен илсен те мадяр чĕлхи, чăваш тата ытти тюрк чĕлхисем пекех, сингар-монизм законне пăхăнса тăрать. Пĕр-пĕр сăмахра е малти ретри, е кайри ретри усă сасăсем кăна пулма пултараççĕ. Тĕслĕхсем: kicsiny (кичинь > чăв. кĕçĕн), sarló (шарло > чăв. çурла) тата ыт. те.

Мадяр чĕлхинче сăмах тĕпĕ çумне тĕрлĕрен суффиксем (аффикссем) çыпçăннипе (аглютинациленнипе) çĕнĕ сăмахсем пулса е улшăнса пыраççĕ. Тĕслĕхрен: borju-k-nak (пăру-сен-е). К—нумайлă хисеп суффиксĕ, nak—пару падеж суффиксĕ.

Япала ячĕсем улшăнаççĕ (сăпатланаççĕ): kardo-m (хĕç-ĕм), kardo-d (хĕç-ÿ), kardo-tok (хĕç-ĕр) т. ыт. те. Падежсен шучĕ çирĕме яхăн. Япала ячĕ умĕнче тăракан тепĕр япала ячĕ (тюрк чĕлхисенчи пекех) унăн определенийĕ пулса тăрать. Иккĕмĕш япала ячĕ камăнлăх аффиксне йышăнать. Тĕслĕх: anya könyv-e (анне кĕнек-и) тата ыт. те. Мадяр чĕлхинче те рода пĕлтерекен грамматикăлла формăсем çук. Предлогсем вырăнне хыççăмахсем пур. Тĕслĕх: könyv m e l l e t t (кĕнеке ç у м ĕ н ч е).

Синтаксис енчен илсен те мадяр чĕлхи тюрк чĕлхисене çывăх тăрать. Определенисем япала ячĕ умĕнче тăраççĕ, анчах вĕсем япала ячĕпе, сăпат, хисеп, род енчен килĕшмеççĕ. Хисеп ячĕсем хыççăн япала ячĕсем пĕрреллĕ хисепре тăраççĕ: öt disznó (пилĕк сысна). Япала ячĕсем пĕр-пĕрин çумне час-часах ним улшăнмасăрах ларнипе хут сăмахсем пулаççĕ: anyanyelv анне чĕлхи > тăван чĕлхе), író-asztal (çыру сĕтелĕ).

Мадяр сăмахĕсене вулама çăмăлтарах пултăр тесе, эпир кунта хăшпĕр саспаллисене вырăс е чăваш саспаллийĕсемпе танлаштаратпăр.

С—вырăсла ц; cs—вырăсла ч; gy—«ача» сăмахри «ч» пек, вырăсла «дь» евĕрлĕрех; hy—«няня» сăмахри «н» пек»; s—вырăсла ш; sz—вырăсла с; ty—«чăваш» сăмахри «ч» пек; ly—«лĕпĕш» сăмахри «л» пек; z—вырăсла «з»; zs—вырăсла «ж»; i, ö, ü саспаллисем нимĕçле i, ö, ü саспаллисем пекех, анчах вĕсене тăсса вуламалла мар. Усă саспаллисем тăрринче чалăш йĕр пулсан, (ударени палли) вĕсене вара тăсса вуламалла: á, é, í, ó, ú.

Паллах ĕнтĕ, мадяр чĕлхине кĕнĕ чăваш сăмахĕсем чăваш халăхĕ камран пулса кайнă ыйтăва тĕпĕ-йĕрĕпе татса пама пултараймаççĕ, çапах та вĕсем авалхи мадярсен (угрсен) кÿршисем камсем пулнине тата вĕсем культурăпа экономика енчен мĕнле пусма çинче тăнине тĕплĕн кăтартса параççĕ.

Авалхи чăваш чĕлхипе калаçакан халăхсем камсем пулни тата вĕсем мадярсемпе мĕнле вырăнсенче кÿршĕллĕ пурăнни çинчен сăмах хускатса яриччен, чăн малтан мадяр чĕлхине кĕнĕ авалхи чăваш сăмахĕсене ушкăнăн-ушкăнăн уйăрса тухар. Мадярсем, хальхи тăван çĕршывне пырса кĕриччен, паллах, пулă тытса пурнакан, сунара çÿрекен халăх пулнă. Вĕсен пурнăçĕнче килти выльăх-чĕрлĕх пысăк вырăн йышăнман. Тюрк чĕлхипе калаçакан халăхсемпе (пулхăрсемпе) кÿршĕаршăн пурăнма тытăнсан, мадярсем выльăх-чĕрлĕх, чăх-чĕп усрама вĕренеççĕ, вĕсен ячĕсене йышăнаççĕ. Çапла вара, хальхи мадяр чĕлхинчи хăшпĕр выльăх-чĕрлĕх ячĕсем чăваш сăмахĕсене çывăххи уççăн курăнать.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Мад. | ökör | чăв. | вăкăр |
| » | tinó | » | тына |
| » | ünó | » | ĕне |
| » | borjú | » | пăру |
| » | kecske | » | качака |
| » | disznó | » | сысна |
| » | tyúk | » | чăх(а) |
| » | teve | » | тĕве |

Хăшпĕр юр-вар ячĕсене те мадярсем хăйсен кÿршисенченех илнĕ. Ак, сăмахран, эпир «ĕне ырри» тетпĕр. Мадяр чĕлхинче író сăмах пур. Вăл чăвашла ĕне сĕтĕнчен тунă т ă п ă р ч ă тени пулать. Паллах, író сăмахпа ĕ н е ы р р и хушшинче этимологи çывăх. Мадярла túró сăмах та т у р ă х сăмаха пĕлтерет.

Мадярсен чĕлхине пуринчен ытла ялхуçалăх ĕçĕсене, ялхуçалăх продукчĕсене пĕлтерекен сăмахсем кĕнĕ. Ку, паллах ĕнтĕ, вырăнтан вырăна куçса çÿренĕ мадярсем культурăлла çĕнĕ терминсене çĕрĕçĕпе пурăнакан кÿршисенчен йышăннине пĕлтерет.

| | |
|---|---|
| Мад. eke | чăв. ака(пуç) |
| sarló | » çурла |
| árpa | » урпа |
| szór/ni (инфинитив) | сăвăрни (тырă) |
| szúr/ni (инфинитив)[1] | сĕрни (сăра) |
| serpó | » çĕпре |
| kovász | » кăвас (чусти) |
| komló | » хăмла |
| sör | » сăра |
| kender | » кантăр |
| tiló | » тылă |
| alma | » панулми |
| bors | » пăрăç |
| borsó | » пăрçа |
| gyümölcz | » çимĕç тата ыт. те. |

Çурт-йĕрпе çыхăннă сăмахсем те, паллах, тюрк чĕлхипе калаçакан пулхăрсем цивилизаци енчен ун чухнехи мадярсенчен çÿлте тăнине пĕлтерессĕ.

| | |
|---|---|
| Мад. sátor | чăв. çатăр |
| bölczó | » пĕлчĕ (зыбка) |
| szék | » сак(ă) |
| seper(ni) | » шăпăр (урайне шăлни) |
| tükör | » тĕкĕр |
| gyertya | » çурта |
| gyúrü | » çĕрĕ |

Мадярсен кÿршисем çырупа шут ĕçне те лайăх пĕлнĕ. Паллах ĕнтĕ, ăс-тăн культурине пĕлтерекен сăмахсене те мадярсем авалли пулхăрсенченех илнĕ. Тĕслĕхсем: мад. írni, чăв. çыр; мад. töménу, чăв. тĕмень (вунă пин), вырăсла тьма; мад. szam, чăв. сум, вырăсла «счет». Çакăн хыççăн паянхи чăваш чĕлхинчи «сумлă çын», «сумсăр çын» е «сумсăра тухнă» сăмахсен пĕлтерĕшне ăнланса илме пит çăмăл.

Будапешт университетĕнче чăваш чĕлхи вĕрентекен Ю. Ф. Немет профессор Чăвашсен педагогика институтне çырнă çырăвĕнче «добродетель», «порок», «буква»

---

* Литерасем çук пирки мадярла о, и хăшпĕр саспаллисем тăррине икĕ чалăш паллă вырăнне пĕрер кăна лартнă. *Ред.*

[1] Мадяр чĕлхинче инфинитивпі суффикс йышăнать.

Дунай ҫинчен каялла таврӑнакан пулхӑрсем Атӑл ҫинчи патшалӑхне шӑп хӑҫан туса лартни ҫинчен калама йывӑр, анчах та историксем ӑна ҫиччӗмӗш ӗмӗртен маларах пулма пултарайман, теҫҫӗ. Атӑл ҫинчи пулхӑр патшалӑхӗ ҫинчен эпир ытларах араб историкӗ Ахмет-Ибн-Фадланран (922 ҫул) пӗлетпӗр.

7-мӗш ӗмӗрчен Атӑлпа Шур Атӑл хушшинчи халӑхсен ячӗсем хушшинче «чӑваш», «ҫуас» е савнашкал ят пулманни курӑнать. Ун ҫинчен ак мӗн кӑтартса парать.

350-мӗш ҫулсем тӗлне готтсен усал патши Эрманарих морд-енс, мер-енс, сремис-енс халӑхсене пӑхӑнтарнӑ тени пур (-енс готт чӗлхинче нумай хисепе пӗлтерекен суффикс). Кун ҫинчен готтсен историкӗ Йорданис 550 ҫулсенче ҫырнӑ. Ҫапла вара, чӑвашсен авалхи тӑхӑмӗсем Атӑл тӑрӑх ҫурҫӗрелле пулхӑрсемпе пӗрле каярахпа ҫеҫ хӑпарма пултарнӑ.

Ҫырса пӗтернӗ май, тепӗр ыйтӑва та ответлер. Паянхи чӑваш чӗлхин ватӑ тӑхӑмӗ тюрк чӗлхисем пӗр-пӗринчен уйӑрлса кайиччен, Байкал кӳллисем патӗнче, монгол-алтай чӗлхисем сарӑлнӑ вырӑнсенче, хунав янӑ пулмалла. Вӑл тюрк чӗлхисемпе алтай-монгол чӗлхисем хушшинче хӑйне уйрӑм тӑнӑ. Каярахпа гуннсемпе пулхӑрсен пӗрлешӗвӗ вӑхӑтӗнче, пулхӑрланса кайнӑ, ҫапах та вӑл мӗн юлашки вӑхӑтчченех хӑйӗн законӗсемпе таланса пынӑ.

М. ФЕДОТОВ.

# Азербайджан культурин пысӑк уявӗ



Ҫак кас хине Мускаври театрсемпе концерт залӗсенче, Манежнай площадьпе ҫӗрпыври культура ҫурчӗсенче, радиоприемниксемпе динамиксем умӗнче халӑх чылай йышлӑ пулчӗ. Нумай нациллӗ совет халӑхӗ Азербайджан искусствипе литературин Мускавра иртнернӗ юлашки концертне хумханса пӑхрӗ, радиопа итлерӗ. Мускав ҫыннисем вара тӑванла азербайджан халӑхӗн представителӗсене, савӑнӑҫлӑн кӗтсе илнӗ пеках, ӑшӑ кӑмӑлпа, пӗтӗм чӗререн ырӑ сунса ӑсатрӗҫ. Юлашки концерта вара Мускав ҫыннисем азербайджанран килнӗ чыслӑ та хисеплӗ хӑнасене, вӗсен наци формипе аталанса пыракан искусствишӗн савӑнса, нумайччен алӑ ҫупса саламларӗҫ. Юлашки концертран тухсан вӗсем вунӑкунлӑхра кӑтартнӑ концертсемпе балетсене, оперӑсемпе спектакльсене, художествӑлла пултарулӑх ансамблӗсен, поэтсен сӑввисене тепӗр хут аса илчӗҫ. Ҫӑлкуҫ евӗр шӑнкӑртатса юхан азербайджан юрри-кӗвви те, тӗлӗнмелле илемлӗ балечӗ те, халӑх ташши-юрри те яланлӑхах асра юлчӗ. Вунӑкунлӑх хушшинче Мускав ӗҫҫыннийӗсем К. Караевӑн «Семь красавиц» балетне курчӗҫ, ӑна Ахундов ячӗпе хисепленекен оперӑпа балет театрӗ кӑтартрӗ. Азизбеков ячӗпе хисепленекен театр коллективӗ В. Шекспирӑн «Отелло» драмине, С. Вургун ячӗпе хисепленекен театр унӑн «Вагиф» драмине лартса пачӗ.

Заводри юрӑпа ташӑ ансамблӗн концерчӗ те Мускав ӗҫҫыннийӗсене питӗ килӗшрӗ. Шмидт лейтенант ячӗпе хисепленекен заводри ансамбль республикӑри художествӑлла пултарулӑх кружокӗсенчен чи лайӑххи шутланать. Ансамбль участникӗсем — рабочисемпе служащисем — азербайджан ташшисемпе юррисене пысӑк ӑсталӑхпа кӑтартрӗҫ. Уйрӑммӑнах «Баку» сюитӑри хӗрсен ташши пурне те килӗшрӗ.

Азербайджан литераторӗсем те Мускав ҫыннисене хӑйсен нумай енлӗ произведенийӗсемпе паллаштарчӗҫ. Вунӑкунлӑх хушшинче азербайджан литераторӗсен произведенийӗсене СССР писателӗсен Союзӗнче тӗплӗн сӳтсе яврӗҫ. Вунӑкунлӑхӑн юлашки касӗнче Р. Рза, С. Рустам, Б. Вагабзаде, М. Гюльгун, А. Джамиль, Н. Рафибейли тата ытти поэтсем хӑйсен сӑввисене вуласа пачӗҫ.

— Пирӗншӗн, Советлӑ Азербайджан представителӗсемшӗн, искусствӑпа литература вунӑкунлӑхӗ пирӗн культурӑн ҫав тери пысӑк уявӗ пулса тӑчӗ,— терӗ хӑйӗн юлашки сӑмахӗнче Азербайджанри Коммунистсен партийӗн Центрльнай комитечӗн секретарӗ А. Байрамов.— Ҫак уяв нумай нациллӗ Тӑван ҫӗршывӑн халӑхсем хушшинчи туслӑхне тепӗр хут кӑтартса пачӗ.

*Ӳкерчӗкре:* Заводри ансамбль «Баку» сюитӑри хӗрсен ташшине ташлать.

М. Редькин тунӑ сӑнӳкерчӗк (ТАСС).

*Журнал хуплашкин пӗррмӗш страницинче: электроаппаратсем тӑвакан заводра ӗҫлекен Нина Кочнева. П. Ефремов тунӑ сӑнӳкерчӗк; тӑваттӑмӗш страницӑра: Ильинкӑри кану ҫуртӗнче. А. Припалов тунӑ сӑнӳкерчӗк.*

ЯЛАВ № 6 (356)
ИЮНЬ — 1959

ЕЖЕМЕСЯЧНЫЙ ЛИТЕРАТУРНО-ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ И ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКИЙ ЖУРНАЛ СОЮЗА ПИСАТЕЛЕЙ ЧУВАШИИ.
ИЗДАТЕЛЬ: ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО.

Редактор: Г. А. Ефимов. Редколлегия: В. О. Алагер, В. Я. Канюков, И. Д. Кузнецов, П. К. Львов, А. Ф. Талвир, Уйп Мишши.

*Рукописи не возвращаются* *Корректор Ю. Миронова*

НТ 00137. Подписано к печати 16-VI-59 г. Объем 5,82 п. л. Тираж 10.000 экз. Заказ № 923. Цена 2 руб.

Адрес редакции: Чувашская АССР, г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 1. Телеф. № 8—36.
*Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.*